## ФЕДОР ЕРМИЛОВИЧ АФАНАСЬЕВ
## (Хветĕр Уяр)
## (1914)

### Лашана çăлни.

Ваçук турат куçĕ витĕр лаçалла пăхса тăчĕ-тăчĕ те хĕрача патне таврăнчĕ. Сăнĕ-пуçĕ хăйĕн шап-шурă.

– Ку мĕнле япала, Ульти? Çава патне тĕшмĕшне-мĕнне! Мĕн мыскари ку?!

– Ан кăшкăр-ха эс, ача. Ялта мар-çке эс. Кунта ваттисем çывраççĕ, киремет кати те инçе мар... Мĕнле, вилеймен-и лаши?

– Итле-ха, малтан ăнлантарса пар эсĕ мана. Ку мĕне пĕлтерекен йăла? Ма выçăхтарса вĕлереççĕ ĕç выльăхне?

– Эп ăçтан пĕлем? Ăна Сухвун мучи ячĕпе парне кӳнĕ тет. Пĕлтĕр вилнĕ усал старик пурччĕ пирĕн урамра. Çавă хăйне пĕртен-пĕр лашипе асăнма хушса хăварнă пулнă.

– Пусса пăрахма çук-и лашине кирлех пулсан? Ма асаплантараççĕ мĕскĕне?

– Вăл хăй вилĕмĕпе вилмелле тет.

– "Тет". Ытла нумай пĕлетĕн эс. Атя, кайрăмăр! – тесе Ультие аллинчен ярса тытрĕ Ваçук.

– Ăçта, киле-и?

– Киле сана. Витене кĕретпĕр. Вĕренне салтса яратăп...

Хуралтă çумне çитнĕ Ульти аллине карт туртса илчĕ.

– Ун пек ăна каялла пур пĕрех килсе кăкараççĕ. Хăй татса кайсан çеç çăлăнма пултарать вăл.

– Ăçтан таттăр вилес патне çитнĕ лаша? Тен, вилнĕ те вăл? Атя-ха кĕрсе пăхар.

Çӳçе тураттисене сиркелесе вĕсем лаçа пуçĕсене чикрĕç. Леш стена çумĕнче урапа ларать-мĕн. Туртисене çӳлелле çĕкленĕ. Вĕсен хушшинче тепĕр стена çумĕнче – кӳлмелли хатĕрсем. Çĕр урайĕнче çӳрен лаша выртать. Ăна сӳс вĕренпе чĕлпĕр тăршшĕ ярса кутсăр ӳречинчен кăкарнă – пыр та тат эс ăна. Шакăр шăмă тăрса юлнă мĕскĕнĕн. Ĕçлесе ывăннă урисене ачасем еннелле тăснă, пуçне çĕре хунă та паш-паш-паш сывласа выртать. Тути

юнăхса çуркаланса пĕтнĕ. Пуçĕ çитнĕ таран пĕтĕмпех кăшланă лаша. Урапа ўречи, кустăрма тукунĕн çўл енĕ шап-шурă. Курăк тымарĕ шыраса çĕре те кăшланă вăл.

Хăйне кăкарнă вĕрене татма çеç ăс çитереймен янавар*. Хăйĕн хуçине – çынна – шаннă ĕнтĕ, айван, мана вăл усал тăвас çук тенĕ пуль.

Ачасем çине пăхас тесе пуçне çĕклерĕ те вăл ăна лашт çĕре ўкерчĕ, пĕтĕм кĕлеткипе туртăшса илчĕ. Хупнă икĕ куçĕнчен шăпăртатса куççуль юхса анчĕ.

– Çук, пăхаймастăп, – тесе Ульти каялла чакрĕ. Анчах каймарĕ, йывăç кутне хутланса ларчĕ.

Ваçукăн çилли килсе çитрĕ. Кирек мĕнле пултăр тепĕр тесен, кĕрет те вĕренне салтса ярать вăл. Йыснăшне каласа парать. Лаша хуçисене намăслантарсан та аванччĕ, ўлĕмрен ан хăтланччăр ун пек. Е... хăйне валли туянасчĕ ку лашана. Хăй çиес çăкăра ăна парĕччĕ ача.

Çапла сĕмленнĕ май вăл пĕр енчен кĕме тăчĕ витене – лаша уринчен шикленчĕ. Сасартăк тапса ярĕ те... Вара лаша пуçĕ патĕнчен иртрĕ те вĕрене салтма тытăнчĕ – салтаймарĕ. Вилĕ тĕвĕпе çыхса пурантарса лартнă-мĕн. Ытти шухăшĕ те пустуй кăна ун: яла çитсе çынсемпе калаçса çўренĕ çĕре лаши те вилсе кайĕ... Ун çинчен çынсене пĕлтерме те юрамасть ав. Тахăш вăхăтра ун çумне Ульти пырса тăнă: куçĕнчен пăхса йăл кулчĕ.

– Эс пирĕн çăкăр пирки манман-и? Тен, парар ăна?..

– Лашана-и? – савăнсах аса илчĕ Ваçук. – Чăнах та-çке. Шывне ĕçтерĕпĕр-и?

Ульти çўçе турачĕсем хушшинчен витрине йăтса кĕчĕ. Хĕвĕнчен çăкăр чĕллине кăларчĕ. Вĕсем лаша пуçĕ вĕçне кукленсе ларчĕç.

– Çăкăрне пĕр тăруках парса пăхар-и? – ыйтрĕ Ваçук.

– Тен, икке уйăрар? – терĕ Ульти.

Çăкăрне Ваçук çурмаран уйăрчĕ те пĕр татăкне Ультие пачĕ, теприне хăйне хăварчĕ.

---

* Я н а в а р – чĕлхесĕр чĕр чун.

Хĕрача хăйĕн тӳпине витрене чиксе кăларчĕ.

– Ма шыва чикрĕн? – терĕ Васук.

– Анне çапла тăвать, – ăнлантарчĕ Ульти.

Вара Васук та çăкăрне шывра тытса тăрса ислетрĕ те çĕре, лаша сăмси умне, хучĕ. Хăйсем стена умне чакса ларчĕç.

Чĕре сури тумалли шăрша туйса илнĕ лаша куçне чалт уçса ячĕ те çăкăр татăкне хыпрĕ. Урисене хăй айне пуçтарса тирпейленсе выртасшăнччĕ вăл – вăй çитереймерĕ.

– Кĕлермелле кайса ӳкмен-ши вăл? – терĕ ача.

– Çу-ук. Куран пулĕ – вилме выртнă. Выçă пурăнса пăхха ху.

– Эппин, часрах çăкăрна çитер.

– Ме, эсĕ пар.

– Ма ху памастăн? Сан пай-çке вăл.

– Эс арçын, сана килĕшет. Çылăхран хăрамалли те çук сан – эс вырăс ачи. Анне каларĕ – сана тем тума та юрать терĕ.

– Мĕнле вăл – тем тума та юрать? Пуçхĕрлĕ çӳресен те вăрçмаççĕ-и?

– Тăрса пăх-ха пуçхĕрлĕ, мĕн пулĕ унта. Лашана вилĕмрен çăлас пирки калаççĕ сана, çавна та ăнланмастăн...

– Ачасене кайса чĕнеп те...

– Никама та пĕлтермелле мар тесе каларăм-и эп сана?

– Пĕччен мĕнле вăй çитерес ман ăна ура çине тăратма?

– Ма пĕччен? Эпĕ те пур-çке.

– Ну, иккĕн пулар. Пурĕпĕр сахал.

– Шухăшла эс. Пуç пур вĕт санăн. Хамăр иккĕн эпир, пуççем иккĕн. Алăсем миçен.

– Çапла та-ха вăл... Атя-ха эппин, ута хускатса пăхар.

Вĕсем кутлăх патне çĕре ларчĕç те тĕкрĕç-тĕкрĕç лашана çурăмĕпе хырçинчен – лешĕ тапранмарĕ те. Анчах çăкăр таткине каллех хыпрĕ. Шыв ĕçтерме хăтлансан çеç сасартăк хускалчĕ те витрене сирпĕтсе ячĕ. Лаша çăварне шыв пĕр тумлам та лекмерĕ.

– Шăвартăмăр лашана, – терĕ макăрса ярас патне çитнĕ Васук.

– Ма, шăвараймаççĕ тетним, шăвăратпăр, – хатарланса витрине тытрĕ Ульти. – Атя, кайса ăсса килетпĕр.

– Халь тин-и? Кĕçех тĕттĕм пулать.

– Луччă никам та курмасть. Усал-тĕселе хăратма пирĕн алăра тимĕр те пур.

– Вĕсем хăраççĕ тет-им тимĕртен?

– Хăрамасăр. Тимĕре ăна вут çинче хĕртеççĕ те. Вут-кăвар – таса япала.

Туссем шыв еннелле анса кайрĕç.

* * *

Вăл çĕре Васук тĕлĕкри пек ирттерчĕ. Куçне хупать кăна – вилме выртнă лаша курăнса каять. Шакăр шăмă вăл. Пуçне çĕклемелĕх вăйĕ юлман. Хăй вилĕмрен çăлăнассине те шанми пулнă пулмалла, çăкăр шăршине туйсан мĕнле тĕлĕнсе, анăраса, хăраса пăхрĕ ачасем çине. Тата шыва мĕнле антăхса çăтрĕ кайран. Нумаях ĕçеймерĕ, каллех тăкса ячĕ. Çапах çунакан ăшне кăштах пусарчĕ пуль.

Тарăхнипе Васук утиялне сирсе пăрахать. Кур-ха эсĕ: ытти лашасем ĕç хыççăн курăк çисе çӳреççĕ. Куна çăва çине кайса хупнă. Çынсен темле йăлине пула унăн выçă хăрăнса вилмелле иккен. Мĕншĕн?

Унтан тепĕр майлă шухăшласа пăхать ача. Лаша вырăнĕнче хăй пулас пулсан унта пĕр кун та тăмăттăм тет. Вĕренне кăшласа тат та тухса тар.

...Касса татма юрамасть иккен тата ута кăкарнă чĕлпĕре. Апла, тен, пĕр-пĕр чул катăкĕпе сăтăрса çийĕнтерес ăна, хăй татăлнă пек курăнтăр? Е хăйрапа хырас?

Çенĕкре выртакан Васук тăрса хуллен пӳрте кĕрет, сĕтел сунтăхне уçса хăйра шырать. Аллине хытса кайнă çăкăр таткисем лекеççĕ. Васук вĕсене те арки çине пуçтарать. Ыранччен çеç ан вилтĕр лаша, вара ура çине тăратаççĕ ăна Ультипе Васук.

Те кăтăш пула пуçланă ача. Ун хăлхине такам ĕнĕрлени пырса кĕрет. Е йытă улать-ши? Сасă таçтан çĕртен тухнă евĕр илтĕнет. Пĕр тикĕс тахçанччен янăраса тăрать, вĕçнелле çеç йытă вĕрнĕ пек пĕтет. Ăна хирĕç çинçерех сасă тăсса ярать. Тепĕр сасă хутшăнать, тата...

Васукăн çÿçĕ чăшăл! турĕ. Вăл тăрса çенĕк алăкне тытса пăхать – сăлăп хупнипех мĕн-ха. Пурпĕрех хăрушă кунта. Çĕр те пĕр алă тăсăлать тейĕн ача еннелле тĕттĕмрен. Вăл пÿрте вирхĕнсе кĕрет, алăкне кĕрслеттерсе хупать.

– Эсĕ-и, Васёк? – ыйтать мăн аккăшĕ.

– Эпĕ.

– Ма çывăрмастăн? Мĕн пулчĕ?

– Темĕн улать унта... Хăратăп эпĕ.

– Йытă пуль ара. Кашкăрсем çывхарнине сиссен çапла канăçсăрланаççĕ вĕсем. Халех пÿрте сарса парăп.

– Йытă мар ку. Сассисем урăхла.

– Ăста-ха? – урай хăмисем йывăррăн шатăртатаççĕ. Чÿрече уçăлса стена çумне çапăнать. Тулта çынсем мăкăртатни илтĕнсе каять. – Мĕн унта сирĕн? – тет Васук мăн аккăш.

– Тукмаксем яла хупăрласа илнĕ! – кăшкăрать урамран хăранă сасă.

"Тукмак" мĕнне пĕлет Васук. Вăл халтан кайса çĕре ларать.

– Эх, пĕтрĕ лаша, – тет те вăл, унăн куçĕнчен икĕ шултра тумлам юхса тухать.

* * *

Тул çутăлнă-çутăлман Ультисем патне чупса каçрĕ Васук.

– Каятпăр-и?

– Кайни те ахаль пуль унта халь тин. Анне калать – ял çине пĕр кĕтÿ кашкăр тапăннăччĕ тет...

– "Тет". Эпĕ хам пăхса тăтăм. Пурпĕр çитсе курмалла ăна. Çисе янă пулсан шăммине çĕре чавса пытармалла. Пирĕн тус-çке вăл. Мĕнле шанса пăхрĕ ĕнер.

– Вара мĕн туса тăратпăр эпир кунта? Халех кĕреçе илсе тухам та...

– Манăн та илмеллисем пур. Уйра кĕтсе тăрăп эпĕ сана.

Пĕр вăхăтрах хире тухрĕç вĕсем. Кив çăва еннелле васкарĕç. Пĕчĕк Ульти пысăк кĕреçе йăтнă. Васук аллинче хыт çăкăр таткисем чикнĕ хутаç.

Хир варринче малтан çÿçе тăрри курăнчĕ. Унтан вите палăра

пуçларĕ. Шурă чулсем хур кĕтĕвĕ пек тухса выртрĕç. Çăва çывхарнăçемĕн ачасен утăмĕ хулленленсе-хулленленсе пычĕ. Вите ик-виçĕ чалăш юлсан чарăнсах тăнăччĕ вĕсем – лаша кĕçенсе ячĕ. Вăйсăррăн кĕçенчĕ, çапах савăннине систерчĕ.

– Чĕрĕ! Чĕрĕ! – кăшкăрса ячĕ Ваçук.

– Чарăн, – терĕ ăна Ульти. – Çынсем илтсен иксĕмĕре те лекет, лаша та пĕтет.

Ваçук – хутаççине, Ульти кĕреçине ывăтрĕç те витене-лаçа вирхĕнсе кĕчĕç. Лаша урисене пуçтарса, тирпейленсе выртнă та ачасем çине пăхать... Лешсем савăннипе макăрса та кулса ăна мăйĕнчен ыталаса илчĕç.

Ачасем йăрансем тăрăх упаленсе çӳресе ухлĕм ути пуçтарчĕç. Лаша сывлăмлă курăк çине пуçне чикрĕ, кăмăрт-кăмăрт тутарса çиме тытăнчĕ. Туссем лапчăнса пĕтнĕ витрепе шыв хĕрне чупрĕç.

...Кăнтăрла иртсен яла мăйне вĕрен татăкĕ çыхнă ырхан лаша сулланса пырса кĕчĕ. Вĕрен вĕçне урипе пуссан вăл кĕл тунă пек пуçне çĕрелле пĕксе илет.

Малтанах ăна никам та асăрхамарĕ-ха. Урам хушшинче кĕр енне темле выльăх та çӳрет. Унтан пĕр старик сăнаса пăхрĕ те кăшт çеç кайса ӳкмерĕ. Тепри кутăн кайса ларчĕ.

Тапранчĕ вара ялта шăв-шав, калаçу. Лашана курни-пĕр хăраса аяккалла тарать.

Курăк çикелесе çӳресен-çӳресен ырхан ут Арихве алăкĕ умне пырса тăчĕ, ура çинчех çывăрса кайрĕ. Çавна кĕтнĕ ватăсем ăна хупăрласа илчĕç те вĕрен вĕçне тыта-тыта пăхрĕç, канашларĕç.

Сăмахĕ пĕрре пулчĕ вĕсен.

– Сухвун старик йышăнман парнене. Вăл унсăрах çырлахнă. Лашан пурнас кунĕ пĕтмен, – терĕç.

Çапла çăлăнса юлчĕ ĕçчен лаша тискер вилĕмрен.

Ваçука е Ультие курсан вăл, лавпа пулсан та, вĕсем патне пăрăнса пăхма пикенетчĕ. Е кĕçенсе те пулин хăй иртсе кайнине систерсе хăваратчĕ. Ачасене мĕншĕн килĕштернине туятчĕç пулмалла та ял çыннисем, çапах калаçу-тăву тухмарĕ ял çине.

*"Шурча таврашĕнче" романран.*

1. Вилнĕ Сухвунăн утне ялти ватăсем мĕншĕн çава çинчи лаçа кайса кăкарнă?
2. Ута курсан ачасем мĕн шухăш тытнă? Ăна мĕнле пулăшаççĕ?
3. Çĕрле Ваçука мĕнле шухăшсем канăç памаççĕ?
4. Лашана кăкарнă вĕрене мĕншĕн касма юраман?
5. Ирхине ачасем мĕнрен шикленеççĕ? Вĕсем ута мĕнле хăтарнă-ши?
6. Мĕн пирки ватăсем лашана Сухвун йышăнман тесе шутланă?
7. Сыпăксене ят пар. Юлашки сыпăка Ульти е Ваçук ячĕпе каласа пар.

## АЛЕКСАНДР АЛЕКСЕЕВИЧ ГАЛКИН
## (1928)

### Ирхи илем.

Ирхи хĕвел алри ача пек
Кулса ярсассăн савăнса
Тавралăхри çанталăк чапĕ
Тухать ума вăй выляса.

Чечекĕ, курăкĕ хĕм сапнăн
Ялтраççĕ сывлăм сыпнипе.
Ыраш пусси çут кĕмĕл çакнăн
Хăй киленет хăй сăнĕпе.

Вăрманĕ, улăхĕ, шыв-шурĕ, –
Пăхатăп та – ик куç тулли.
Çанталăка чун кĕчĕ, курăр! –
Мерчен акать хĕвел алли.

Анасласа илсе сывланăн
Çĕр çĕкленет пек майĕпен.
Вĕр-çĕн куна савнийĕ савнăн
Кĕтсе илет Çĕршыв ирпе...

1. Ирхи хĕвеле сăвăç мĕнпе танлаштарать?
2. Ўсен-тăран ирхине мĕнлерех?
3. "Хĕвел алли мерчен акать" тенине мĕнле ăнланатăн?

## ЛЮБОВЬ ВАСИЛЬЕВНА МАРТЬЯНОВА
## (1950)

### Чĕлхесĕр Иван.

Пысăках марччĕ вăл. Хăй хитре сăн-питлĕ, хура куçлă-çўçлĕ. Анчах та никам та, нихăçан та вăл кулнине курман. Çулпа илес пулсан пĕр хĕрĕхсенчеччĕ-ши... Илтессе вăл пачах илтместчĕ, çав айăппах калаçмастчĕ те. Унăн хăтланкаларăшĕсем айваннăн